2953

УХСАЙ ЯККĂВĔ

# СĂСАР ÇĔЛĔК



ЧАССР ГОСУДАРСТВО
ИЗДАТЕЛЬСТВИ ◆ 1940

УХСАЙ ЯККĂВĔ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры ...
30 января 1941 г.
Подпись Степанова.

# СĂСАР ÇĔЛĔК

Чăваш АССР Государство Издательстви
Шупашкар * 1940

*Кѐҫѐн ҫулхи ачасем валли*

Отв. редактор Кузьма Чулгась.
Тех. редактор Ф. Яковлев.

Сдано в производство 26/II-40 г.
Подписано к печати 24—X—40 г. НТ 2586
Формат бумаги 60×92. Об'ем 0,5 п. л.
Зак. № 908 Тираж 3000.

Отпечатано в Цивильской типографии НКМП ЧАССР

Уртемей мучи ҫӳренӗ
Хуп-хура шӗлепкепе,
Пулнӑ ун матки ҫӗленӗ
Икӗ улача кӗпе.

Тата пулнӑ чӗлӗм унӑн
Пӑхӑрпа тыттарнӑскер,
Ҫӗрпӳри ӑстаҫӑ тунӑ—
Чӑпӑкӗ питех кӗске.

Вӑл малтан кӗске те марччӗ,
Туртмалли пулман чухне
Уртемей мучи туратчӗ
Вӗрене чӑпӑк вӗҫне.

Чĕлĕмне вара чĕртетчĕ,
Сăвăратчĕ пăк та пак.
Çăпата сутса илетчĕ
Хушăран кăна тапак.

Çиçĕм пек пĕрре сасартăк
Сарăлчĕ хыпар ялта.—
Унсăрăн хитре сăсар та
Пулмĕччĕ нихçан унта.

Революци пулнă, теççĕ,
Ӳкнĕ Микулай патша.
Çĕр касма хире каяççĕ
Çамрăкки, ватти, вĕт-шак.

Вĕсен хыççăн акă ĕнтĕ
Пирĕн ватă Уртемей,
Ĕмĕрĕ пайтах пулин те,
Шыраса çӳрет телей.

Хăшĕ пуртă, хăшĕ сенĕк,
Йăтнă хăш-пĕри чукмар.
Уртемей туя çĕкленĕ
Анасен картне хывма.

Пĕлĕтсем пек тухнă халăх,
Хăпса килнĕ ял веçех!
Кĕреçе пекех сухаллă
Ват Кĕлпук мучи виçет.

Аллинче вылять хăлаçĕ,
Касăлать улпут çĕрĕ.
Чарăнать Кĕлпук пăртакçĕ,—
Шухăшлать пуль вĕçсĕрех.

Пар лашаллăн, питĕ меллĕн
Вăркăнса килет çулпа,
Сиктĕрмеллĕ те кӳмеллĕ
Питĕ чаплă урапа.

Пуртă йăтăр! Сенĕк тытăр!
Пăхăр-ха, епле инкек!
Çĕр улпучĕ, ылттăн йытă
Килĕнчен тарать иккен.

Уртемей пырса ал-хапăл
Пĕр лашин йĕвенĕнчен
Пырса тытрĕ,—тăпăр-тапăр
Чарчĕ хăй вырăнĕнче.

Пĕшкĕнсе ларать хăюсăр
Пур пек шурă господин.
Хăть те хĕнĕр, хăть те пусăр,—
Сурăх пек шăпланнă тин.

Нумаях пулмасть çӳретчĕ,
Хăпартатчĕ сехрене.
Çырларан илсе каятчĕ
Пирĕн çамрăк хĕрсене.

Уртемей унта кĕрлерĕ
Паранçи пек пулчĕ ал:
— Пиншакна хывсамччĕ, терĕ,
Ырă çыннăм генерал!

Генерал:—тумланăр, мейĕр!—
Тесе хыврĕ пиншакне.
Тăхăнчĕ хăй Уртемейĕн
Çĕтĕк-çатăк сăхманне.

— Лентă тытнă шалавар та
Кирлĕччĕ, тет Уртемей.
Генерал хыватъ сасартăк,
Нимĕскер те ӳркенмест.

Тăхăнать хăй Уртемейĕн
Кивĕ улача йĕмне.
Ку кĕтӳçĕ пулĕ,—тейĕн,
Пăхсанах улпут çине.

Уртемей питех те çиллĕ
Ларакан улпутăнне
Хывса илчĕ сăсар тирлĕ,
Кăпăш çăмлă çĕлĕкне.

Хăй вара ăна пуç сулчĕ,
Ирĕксĕр тыттарчĕ ал:
—Санăн, терĕ, шалçу тулчĕ,
Халĕ эпĕ генерал.

Çĕр касма капланнă халăх
Шăхăрать-çке ши! те ши!
Хуçине кăшт сулламаллăх
Ĕрĕхет пĕр пар лаши.

Çулĕ кукăр-макăр пултăр!
Кайрĕ мăнтăр шурă пит.
Çулсăр-мĕнсĕр шăлтăр-шалтăр
Шăлтăртатрĕ урапи.

Ууртемей хитре мундирлĕ.
Хулăн хулĕсем çинче
Ылттăн пагонсем тем тĕрлĕ
Йăлтăрарĕçĕ чечен.

Шалаварĕ пит шалпар та,
Тĕсĕ пĕлĕт пек кăвак,
Çĕлĕкĕ çинче кокардă
Йăлтăр-ялтăр çунчĕ ак.

Пур этем те лăхăл-лахăл
Ăш тытса кулаççĕ-çке.
Пур енчен те генерал хăй,
Чăпăкĕ анчах кĕске.

Уртемей, çапах та эсĕ,
Уруна пăхсан, хресчен.
Пилĕк-ултă Георг хĕресĕ
Анлă кăкăру çинче.

Аттине хывса илмесĕр
Юлнă эсĕ, тунката!
Генерал пулма илемсĕр, –
Урăнта вĕт çăпата.

Пилешрен сан чăпăк пултăр,
Лайăхрах, хăвна кура.
Аллăна тыт çивĕч пуртă,
Пахчара тапак тура.

Вăрăм ĕмĕр, сывлăх пултăр,
Енчĕкне тултар тапак.
Ункă-ункă тĕтĕм тухтăр,
Чĕлĕм çунтăр пăк та пак!

Туянатăн сарă атă,
Ӳстерĕн мăкла сухал.
Тин вара, мучи, пулатăн
Эс те ватă генерал.

Пирĕн халăх урлă-пирлĕ
Уртемей пирки шӳтлет.
Сăмахсем юмах пек юплĕ,
Кашниннех кулас килет.

Çак кунтан тин Уртемейĕн
Пуçланса вара каять
Пысăк та хавас телейĕ—
Ăна пĕлчĕ пĕтĕм ял.

Уртемей туянчĕ атă
Белебей пасарĕнче.
Çут пагонĕ те кокардă
Ывăлин ачисенче.

Теттелле вĕсем выляççĕ,
Пырать вăрçă сак çинче.
Шур пуканисем тараççĕ,
Хĕрлисем мĕн пур енче.

Уртемей чипер усратчĕ,
Хăнана каяс чухне
Якатса çеç тăхăнатчĕ
Мундирпе шалаварне.

Тĕпелте, малта ларатчĕ,
Чаплă пекчĕ кĕреке.
Нихăçан та вăл хывмастчĕ
Сăсар тирлĕ çĕлĕке.

Тăрнасем çуллен иртеççĕ,
Шăвăнчĕ çул хыççăн çул.
Тусене çилсем çиеççĕ,
Çырмара вĕтелчĕ чул.

Астăвăр-ха пĕчĕкçеççĕ
Теветкел ачасене,
Халь вĕсем те сиктереççĕ
Ачисен сăпкисене.

Уртемей хура сухалĕ
Шурă чăкăт евĕрех.
Генерал тумтирĕ халĕ
Кивелмен-ха çӳпçере.

Ун çинче çапах куратăн
Пилĕк-ултă хут çулне.
Тикĕтпе çемçетнĕ атă,
Тĕлпулатăн мундирне.

Ваттисем вăлтса каларăш:
Çул çинчи мулкачă пек,
Ансăртран çеç акăш-макăш
Сикнĕ-тухнă пĕр инкек.

Пĕр пăрçа ани колхозăн
Шурă шурлăх патĕнче,
Сăрт çинче пулман пулсассăн,
Уртемейĕн пуçĕнче,

Сăсар тирлĕ çĕлĕк халĕ
Çӳретчĕ вĕчĕхтерсе.
Кӳршĕ-аршă, пĕтĕм ялĕ
Кулас çукчĕ ихĕрсе.

Тăрнасем ялан лараççĕ
Çавăнта пăрçа сăхма.
Пирĕн пуçлăхсем хушаççĕ
Мучие хурал тăма.

Пĕлĕтсем хуллен çеç шунă,
Пулнă шутсăр сивĕ кун.
Çӳçенӳллĕ ватă юнĕ
Пăсăлма пултарнă ун.

Шалаварĕ те мундирĕ
Пулнă унăн çийĕнче.
Ларнă çĕлĕк, сăсар тирĕ,
Вăрăм çӳçлĕ пуç çинче.

Çĕрĕпе вăл хăвалană
Çăтă пыр тăрнасене.
Шуçăм килнĕ. Кирлĕ канăç
Ывăннă урисене.

Уртемей мучи, хуралçă,
Путнă тутлă ăйхине.
Пуçĕнчен йытсем хываççĕ,
Сăсар тирлĕ çĕлĕкне.

Кутăн-пуçăн тăлпалаççĕ,
Çăлкалаççĕ те çăмне,
Йăлăхаççĕ, тарăхаççĕ,
Пытараççĕ тыр ăшне.

Çамкине хуплана сывлăм.
Сиксе тăнă Уртемей:
—Вăрăсем тивмен, тет, сывă,
Çумĕнчех иккен телей.

Çĕлĕк çук—йывăр хуйхă,
Ухтарать мĕн пур çĕре.
Уртемей! Халь хытă суй-ха,
Хайласем тупса çӳре.

Уткаларĕ каллĕ-маллĕ,
Курчĕ çӳлĕ ту çине
Çĕлĕксĕр вăрăм хевтеллĕ
Выртнă хăйĕн мĕлкине.

Нимӗнле те лӑпланмасӑр
Тарӑхать тӑрнасене:
— Пурсӑра тытсан, тӑраймӑр
Манӑн ҫӗлӗкӗн хакне.

Чӗлӗмне хыпса паккарӗ,
Хӑйӗнпе хӑй калаҫса.
Асӗнчен ҫапах каймарӗҫ,
Сӑсар ҫӗлӗк те пӑрҫа.

—Кӗлпукра та пур ҫав айӑп.
Хӑй вӑл манӑн пуҫана.
Кунта, терӗ, вырӑн лайӑх,
Ҫав актарчӗ пӑрҫана.

Тӑхӑрвун ҫулхи ҫав ватӑ
Пӗлмелле тӑван ҫӗрне,
Ку тӗле мӗн пур тавра та
„Тӑрна шурӗ“ тенине.

Айӑп пур-тӑр манӑн ахӑр,
Ҫавӑн чух пухусенче
Эх, каласчӗ ман, ухмахӑн,
Тӑрнасем пурри ҫинчен.

Калаҫса килне уттарчӗ,
Кӗнӗччӗ ҫеҫ алӑкран:
—Ҫӗлӗку ӑҫта ҫухалчӗ?—
Ыйтрӗ арӑмӗ унтан.

—Кӗпертен каҫса пӗтменччӗ,
Ҫил хускалчӗ те тӳрех
Ҫӗлӗке ҫапса ӳкерчӗ
Ҫырмана, вӑта ҫӗре.

Ҫапларах суйса паратчӗ
Ӳртемей чылай вара.
Тыр вырас вӑхӑт пуҫланчӗ,
Кӗр-кӗрлерӗ пусӑра.

Каҫ пулса килет. Туртатчӗҫ
Лашасем пит йывӑррӑн.
Путене вӗҫсе хӑпарчӗ
Вӑрттӑн тунӑ йӑваран.

Кӗлтесем ҫыхан хӗр-арӑм
Тупнӑ унӑн йӑвине.
Ҫӑсар ҫӗлӗкре пит тарӑн
Йӑва тунӑ путене.

Уртемей мучи мăнтарăн
Хыçкалать ёнсе хыçне.
Уйхиртен тухса та тарăн—
Тӳс-ха çĕлĕк мăшкăлне.

Арăмĕ чылай çиленчĕ,
Пычĕ упăшки патне.
Хыттăн-хыттăн çутăлтарчĕ
Питĕнчен Уртемейне:

—Ак сана, тет, çил хускалчĕ,
Ак каçатăн кĕпере!
Çĕрчĕ, тет, килйышăн ячĕ,
Çавăнпа, тет, ак тепре.!

Яланах суя кĕперĕ
Тупаканччĕ—ӳркенмен.
Пĕр сăлтав та тупаймарĕ
Пирĕн ватă Уртемей.

Цена 30 коп.

ЯКОВ УХСАЙ

# СОБОЛЕВАЯ ШАПКА

на Чувашском языке

Госиздат ЧАССР
1940